28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
СЕНТЯБРЬ
21
ЭРНЕКУН
183(6934) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçсем мĕнле пулса пынине пăхса тухса, çакна палăртаççĕ: пирĕн республикăри колхозсем кăçалхи çул выльăхсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе хăшпĕр çитĕнӳсене турĕç. 1945 çулăн 8 уйăхĕ хушшинче республикăри колхозсенче ĕне-выльăхсен йышĕ —4,4 процент, сурăхсемпе качакасен йышĕ—37,5 процент, сыснасен йышĕ—31,5 процент, лашасен йышĕ—4.0 процент чухлĕ ӳснĕ. Çав вăхăт хушшинчех сысна çурисемпе путексен тата тихасен йышĕ те пĕлтĕрхинчен нумайрах ӳснĕ, çитĕннĕ выльăхсемпе çамрăк выльăхсем вилесси чакнă.

Çавăнпа пĕрлех Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртаççĕ: республикăри чылай районсенче 1944—45-мĕш çулхи хĕле начар хатĕрленсе ирттернине пула, нумай выльăх фермисенче выльăхсем, уйрăмах çамрăк выльăхсем, чылай вилсе пĕтнĕ. Выльăхсем çаплах продукци сахал парса тăраççĕ. Кăçалхи 8 уйăх хушшинче кашни тăрантаракан ĕнерен республикипе вăтамран 474 литр кăна сĕт суса илнĕ.

Выльăхсене кĕтӳре сӳретсе е витере тăрантарса самăртмалли план çителĕксĕр пурнăçа кĕрсе пырать. 1945 çулхи 7 уйăх хушшинче сыснасем самăртмалли плана 51.7 процент кăна, ĕне-выльăхсене кĕтӳре сӳретсе самăртмалли плана 43.4 процент кăна тултарнă. Выльăхсене кĕтӳре сӳретсе е витере тăрантарса самăртмалли задание Йĕпреç, Комсомольски, Первомайски, Канаш, Шлей тата Муркаш районĕсенчи колхозсенче уйрăмах япăх пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ аллинчи даннăйсем тăрăх, кăçалхи çул, выльăхсене витере хупса усрамалли вăхăт çывхарса килет пулин те, нумай районсенче выльăхсене хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленеççĕ, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх сурчĕсене вăрахăн юсаççĕ. Кăçалхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Октябрьски районри колхозсенче лаша витисене 40 процент, ĕне витисене—21 процент, сысна витисене—23 процент, сурăх витисене—43 процент, качака-кĕшĕк витисене—30 процент чухлĕ кăна юсанă. Тăвай районĕнчи колхозсенче лаша витисене 51 процент, ĕне витисене—20 процент, сысна витисене — 59 процент, сурăх витисене—50 процент, качака-кĕшĕк витисене—48 процент кăна юсанă. Выльăх витисене юсас ĕç çавăн пекех Чурачăк, Сĕнтĕр, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай тата ытти хăшпĕр районсенче те япăх пырать. Шултăра апатсем пухса хатĕрлесе хумалли плана чылай районсенче тултарман-ха. Хĕрлĕ Чутай, Кувакино, Октябрьски, Шупашкар, Етĕрне районĕсенчи колхозсем силос хывмалли плана тултарман. Первомайски, Улатăр, Пăрачкав тата Кувакино районĕсенчи хăшпĕр колхозсенче халиччен те утă çулса пĕтермен. Выльăхсене хĕл каçарма çавăн пек япăх хатĕрленнине пула, çитес хĕлле выльăхсем чылай вилме пултараççĕ тата вĕсен тухăçлăхĕ чакма пултарать.

Республикăри колхозсемпе совхозсенче выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес шутпа, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене кăçалхи сентябрĕн 20-мĕшĕпе октябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче колхозсем выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе çитнине государство енчен тĕрĕслес тухассине туса ирттерме хушас. Çав ĕçе районсенчи тата колхозсенчи ертсе пыракан работниксенчен тăракан комиссисем туса ирттермелле. Тĕрĕслесе тухнă хыççăн кашни колхоз пирки актсем çырмалла, çав актсене райисполкомсенче пăхса тухмалла.

2. Выльăхсене хĕллехи вăхăтра тăрантарма апат-çимĕç çителĕклĕ хатĕрлесе хурас тата çав апат-çимĕçпе тĕрĕс усă курас шутпа çак ĕçсене туса ирттермелле:

а) колхозсенче выльăх апачĕ хатĕрлемелли плана мĕн чухлĕ тултарнине тата плана тултарман колхозсен улăх-çаранĕсенче çулнă хыççăн ӳссе ларнă курăка тата çулман улăх-çарансене çулассине организацилемелле; халиччен хывнисĕр пусне çĕнĕрен силос хывмалла; уйхирти мĕнпур улăма, арпапа пучаха пухса кĕртмелле; çавăн пекех тата выльăхсене тăрантарма çулçă пухассине йĕркелемелле;

б) колхозсемпе совхозсенче хатĕрлесе хунă мĕнпур выльăх апатне кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр шута илсе прихода кĕртмелле, çав выльăх апатне кладовщиксене е ферма заведующийĕсене актсем тăрăх виççе памалла.

в) мĕнпур колхозсенче выльăхсене витере хупса усракан пĕтĕм тапхăр валли уйăхсерен мĕн чухлĕ выльăх апачĕ расходламалли нормăсемпе плансене çирĕплетмелле, çав нормăсемпе плансене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине çирĕп тĕрĕслесе тăмалла. Выльăхсене витене хупса усрамалли вăхăт çитиччен кĕркуннехи йĕпе-сапаллă тата хĕллехи сивĕ çанталăклă тапхăр валли шултăра апатсен çулталăклăх норминчен виççĕмĕш пайне фермăсем патне турттарса хумалла, çав апатсене кĕркуннерех çитермешкĕн тытăнма чармалла;

г) ферма çумĕнчи участоксенчен пухса илнĕ тымар-çимĕçпе çĕрулмине пĕтĕмпех выльăхсене тăрантарнă çĕре ямалла тăвас пулать. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксене ферма çумĕнчи участоксенче выльăхсем валли тымар-çимĕçпе çĕрулми лартса тунăшăн, ĕçкунĕсем шутласа панисĕр пусне, планран ирттерсе пухса илнĕ тымар-çимĕçпе çĕрулмин виççĕмĕш пайне уйăрса памалла.

3. Выльăх витисене юсаса ăшă тытмалла туман колхозсенче выльăх-чĕрлĕх сурчĕсене хăвăртрах йĕркене кĕртес шутпа ятарласа ремонт бригадисем тумалла. Колхозсене выльăх витисем çĕнĕрен тумалли, юсаса ăшăтмалли срокĕсене кăтартса памалла; районра пĕтĕмĕшпе илсен, выльăх-чĕрлĕх сурчĕсене пурне те кăçалхи октябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр йĕркене кĕртмелле.

4. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн тухăçлăхне тата колхоз фермисенчен илекен таварлă продукци хисепне ӳстерес ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла, çав шутпа фермăсенче выльăхсене пăхассипе тăрантарассине тĕрĕс организацилемелле. Сыснасем самăртмалли плана пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать, çав ĕçре каяш тĕштырăпа, çĕрулмипе, кăшманпа тата ытти апатсемпе усă курмалла.

5. Лашасем ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмалла, пĕтĕ кĕсресене уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Кĕркуннепе çуркуннехи йĕпе-сапаллă çанталăк-вăхăтĕнче тăрантарма пур колхозсенче те мĕнпур лашасем валли чи лайăх утă, пуринчен малтан акса тунă утă, кашни çитĕннĕ лашапа пусне 30 центнертан кая мар тата кашни тиха пусне 20 центнертан кая мар уйăрса хумалла, государствăна обязательнăй йĕркепе тырă парса татнă хыççăн тата вăрлăх фончĕсем хывнă хыççăн лашасемпе ĕç вăкăрĕсем валли уйăрнă утăпа тата тĕштырăпа ытти выльăхсене тăрантарма чарас.

6. Ветеринари учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, вĕсене ерекен чир-чĕрсене тĕпчесе палăртас тата çав чирсене хирĕç прививкăсем тăвас ĕçре пулăшмалла. Выльăхсене витене хупса усрамалли вăхăт пуçланиччен фермăсенче ветеринарипе санитари тĕлĕшĕнчен тумалли ĕçсене туса ирттермелле, лашасен кăрчанкипе пĕтĕмпех пĕтермелле.

7. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене мĕнпур фермăсем валли выльăх пăхакансен (ферма заведующийĕсен, ĕне сăвакансен, сысна пăхакансен, конюхсен тата ытти работниксен) кирлĕ кадрĕсене тупса парас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе тӳрĕ кăмăллă ĕçленĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх хушса тӳлес ĕç мĕнле пулса пынине тĕрĕслесе тухмалла, ĕçшĕн хушса тӳлессине закон кăтартнă срокĕсенче пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать.

8. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене кашни колхоз выльăхсене хĕл каçарма мĕнле хатĕрленсе çитни çинчен тата государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне мĕнле пурнăçлани çинчен кăçалхи ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне отчет тăратма хушас.

9. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсене, ВЛКСМ Обкомне çак постановлени мĕнпур колхозсенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче, партипе комсомол организацийĕсенче сӳтсе-явма хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ вырăнти советпа çĕрĕç органĕсене, партипе комсомол организацийĕсене, республикăри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен мĕнпур работниксене, Кострома облаçĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсен примерĕ тăрăх, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат-çимĕç пухса хурассишĕн, выльăх-чĕрлĕх сурчĕсене хĕле вăхăтра та тĕплĕн хатĕрлесе çитерессишĕн колхозсем, выльăх-чĕрлĕх фермисем, бригадăсем тата комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарса яма чĕнеççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ **А. МАТВЕЕВ.**

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ.**

СОВЕТ ХĔРАРĂМĔСЕН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ПАРИЖРАН ТАВРĂННА

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен конгресне пухас тĕлĕшпе ĕçлекен пуçару комитечĕн ларăвĕсене ирттерме Парижа кайнă совет хĕрарăмĕсен делегацийĕ—çав комитетăн членĕсем М. В. Попова (ВЦСПС секретарĕ), В. В. Васильева тата М. М. Полищученко Мускава таврăннă.

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче государствăна тырă леçсе памалли воскресник пулать

Воскресника тĕплĕн хатĕрленсе ирттерер!

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, сентябрĕн 23-мĕшĕнче государствăна тырă леçес тĕлĕшпе массăллă воскресник пулать.

Райсоветсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен, куллен тырă леçессине чакармасăр, çав воскресника тĕплĕн хатĕрленмелле. Тырра кунтан-кун ытларах та ытларах парса пырса, тĕрлĕ йышши транспорт (автомашинăсем, лашасем, вăкăрсем, ĕнесем) нумай хатĕрлесе хумалла, ыраш çапас тата çапнă тырра типĕтес ĕçе хăвăртлатмалла. Пĕр сăмахпа каласан, сентябрĕн 23-мĕшĕнче колхозсенчен хатĕрлев пункчĕсене тырă йышлăн леçме мĕн кирлине пурне те хатĕрлесе хумалла. Хатĕрлев пункчĕсене лайăх типĕтнĕ, сортланă тырра çеç леçмелле.

Предприятисен, учрежденисен, организацисен транспорчĕпе те усă курмалла. Районсемпе хуласенчи мĕнпур автомашинăсене сентябрĕн 23-мĕшĕнче тырă леçме ямалла. Кашни машинăна пĕр пиллĕк колхоз çумне çирĕплетсе хумалла, ăна тырă леçме задани памалла. Çав задачисене пĕр сăмахсăр пурнăçламалла.

Заготзерно системинче ĕçлекен работниксем умĕнче пысăк задача тăрать. Илсе пыракан тырра вĕсен пĕр чарăнмасăр хăвăрт йышăнса тăмалла, автомашинăсен те, колхоз лашисен те нумай кĕтсе тăмалла ан пултăр.

Государствăна тырă парас ĕçре Чăваш республики кая юлса пырать. Государствăна тырă срокчен парса татма илнĕ обязательствăна пурнăçлас ĕç хăрушлăхра тăрать. Çавăнпа та халь тырă парас ĕçе хăвăртлатма, тырра хатĕрлев пункчĕсене хăвăртрах леçме пĕтĕм вăя тата мĕнпур майсене мобилизацилемелле. Ялсенчи коммунистсемпе комсомолецсен государствăна тырă леçмелли воскресникре чи малти ретре пулмалла. Транспорт бригадисенче стахановла ĕçлесе, вĕсен государствăна тырă памалли плана — хамăр Тăван çĕршыв панă çак питĕ паха задание—тултарас ĕçре пример кăтартмалла.

Государствăна тырă парас ĕçре Чăваш республики кая юлнине пĕтерасси—мĕнпур районсемпе колхозсен, Чăваш республикинчи мĕнпур общественноçăн тивĕçĕ пулса тăрать.

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче хатĕрлев пункчĕсене тырă йышлăн леçес ĕçе организацилер! Пурте — воскреснике!

Тырă вырса пĕтерне районсем

Вăрнар, Советски тата Красноармейски районсем хыççăн сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне Сĕнтĕр, Елчĕк, Калинино, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Чурачăк, Шупашкар районĕсенчи колхозсем те тĕштырăсем вырса пĕтерчĕç. Халĕ çак районсенче капан хываççĕ, авăн çапаççĕ тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕçлеççĕ.

* * *

КАЛИНИНО, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ĕнер районри колхозсем 16.175 гектар тĕрпырăсене вырса пĕтерчĕç. Кăçал уйрăмăнах «Сутталла», «Броневик», «Клевер», «Правда» колхозсем лайăх ĕçлерĕç. Çак колхозсем районра чăн малтан тырă вырса пĕтерчĕç тата государствăна тырă памалли плана та пурнăçласа пыраççĕ.

Тĕштырăсене вырса пĕтерне хыççăн колхозсем авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçе пĕтĕм вăя мобилизацилерĕç. Районра малта пыракан «Правда» колхоз (председателĕ Прохоров юлташ), «Красный кавалерист» колхоз (председателĕ Федоров юлташ), «Красноармеец» колхоз (председателĕ Николаев юлташ), Çавалкассинчи «Сутталла» колхоз, «Коминтерн» колхоз (председателĕ Скворцов юлташ). Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Кулагин юлташ) государствăна тырă парса татнă.

Чылай колхозсенче кĕрхи сĕртме тăвас ĕç те ăнăçлă пырать. «Социализм» колхоз (председателĕ Спиридонов юлташ), «Новый путь» колхоз (председателĕ Назаров юлташ) сĕртме тумалли плана 70—80 процент тултарнă.

Пирĕн районри колхозсем пурĕ 328 гектар махорка лартнăччĕ. Паянхи кун тĕлне çак махоркăна пĕтĕмпех касса пухнă.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

* * *

СЕНТĔРВĂРРИ, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Паян районри колхозсем тĕштырăсемпе пăрçа йышши тырăсене 9.769 гектар вырса государство планне тултарнă.

Районра халĕ капан хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕç хĕрӳллĕ пырать. 12 колхоз государствăна тырă памалли плана тултарнă.

Сентябрĕн 19-мĕшĕнче спирт заводне «Пищевик» колхоз 129 центнер, «Коминтерн» колхоз 32 центнер, Упакасси ял Советĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз 41 центнер, «Новая деревня» колхоз 24 центнер государство обязательстви тăрăх çĕрулми кӳрсе панă.

И. САЛАМБЕК.

Вăрлăхлăх клевера çапса шĕкĕлчеме тытăнатпăр

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрĕн 20-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Пирĕн МТС-ăн кăçал комбайнсемпе 1700 гектар тырă вырса пухмаллаччĕ, паянхи куна пурĕ те 1600 гектар ытларах кăна вырса пухнă. Плана тултарас шутпа комбайнсемпе малалла вăрлăхлăх хăварнă курăксене вырса пухма шутлатпăр. Чылай комбайнерсем хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарчĕç. Комбайнер В. Самарина юлташ 206 гектар, А. Кадкин 150 гектар, Старостин 203 гектар, Панков 190 гектар вырса пухрĕç.

Халĕ тракторидтсемпе трактористкăсем кĕрхи сĕртме тăваççĕ, паянхи кун тĕлне 400 гектар ытларах сухаланă. Çак кунсенчех авăн çапнă çĕрте ĕçлемен тракторсене сĕртме тума куçаратпăр.

А. ДМИТРИЕВА.

Хăйсен вăкăрĕсемпе ĕçлеççĕ

Первомайски районри Йӳç Шăхаль ял Советне кĕрекен «Ударный» колхоз членĕсем М. Мокеева, В. Албутов, П. Кузьмин юлташсем хăйсен вăкăрĕсемпе кĕлте турттараççĕ. Вĕсем кашни кунах хиртен итем çине 15—20-шер лав кĕлте кӳреççĕ. М. Мокеева кĕлте турттарнипе пĕрлех хăйĕн вăкăрĕпе государствăна 33 центнер ытла тырă леçсе панă.

Малашне те пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн

Елчĕк районĕ пухса кĕртмелли тырпул лаптăкĕн пысăклăхĕпе республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнать. Çак район сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 30.880 гектар тĕштырă пухса кĕртсе, республикăра 4-мĕш вырăн йышăнчĕ. Районра капан хывас ĕç те лайăх пырать, паянхи куна 20.583 гектар çинчи тырра капана хывнă, 13.425 гектар çинчи тырра çапнă. Районра кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ мăйракаллă шултăра 700 выльăхпа усă кураççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра государствăна 4000 пăт тырă вăкăрсемпе леçнĕ.

«КИМ» колхоз халиччен юлса пыракан колхозсен шутĕнчеччĕ. Кăçал пур ĕçе те уйрăм сдельщинăпа туни тата тырпул пухса кĕртес ĕçе мĕнпур колхозниксене явăçтарни ĕçĕн ăнăçлăхне татса панă. Çак колхозра ВКП(б) райкомĕпе райисполкомĕн уполномоченнăйĕ пулса Майкова юлташ ĕçлет. Вăл агитаторсене ĕçе явăçтарнипе пĕрлех, хăй те колхозниксемпе пĕрле ĕçленĕ тата сăмахпа кăна мар, хăйĕн ĕçĕпе те лайăх тĕслĕхсем кăтартса панă. Машинăпа вырнă тырра сыхас ĕçре вăл кулленхи нормăна 2 хут ытла тултарса пынă. Çамрăксем хăйсен участокĕсене вырса пĕтериччен те хиртен таврăнман. Çакăн пек паха тĕслĕхсем Лаш-Таяпари Крупская ячĕпе тăракан, Питĕпелĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те пулнă.

Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхоз (председателĕ орденоносец В. Зайцев юлташ) тырпул пухса кĕртес ĕçре калама çук паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ. Кунта 7 жнейкăпа таттисыпписĕр тырă вырнă. 797 гектар çинчи тырра кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртнĕ. Жнейкăпа ĕçлекен Иван Портнов (Отечественнăй вăрçă инвалиде) тата Петр Алексеев юлташсем кашни кунах 6—6,5-шар гектар тырă вырнă. Тырпул пухса кĕртес ĕçре Матрена Лаврентьева юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада мала тухса, колхозăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕç пулнă. Колхоз сентябрĕн 18-мĕшĕ тĕлне государствăна 8.562 пăт тырă парса хăйĕн планне тултарнă.

Халĕ колхозра хĕрсех авăн çапаççĕ, кĕрхи сĕртме тăваççĕ. Колхозăн план тăрăх 360 гектар сĕртме тумалла, вăл шутран 300 гектарне яхăн сухаланă та ĕнтĕ. Кунта кашни кунах 36 лаша сĕртме тунă çĕрте ĕçлет.

Елчĕк районĕнче малта пыракан колхозсем юлса пыракансене пулăшассине яланах хăйсен тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Ворошилов колхоз та хăйĕн тĕштыррисене вырса пĕтерсенех, кӳршĕри юлса пыракан «Автогигант» колхоза тырпул пухса кĕртес ĕçре пулăшма 3 жнейка, 6 лаша тата 30 çын янă. Вĕсем «Автогигант» колхоза 60 гектар вырса панă.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртакан «Марс» колхоз та (председателĕ орденоносец А. Гаязов юлташ) малти ретре пырать. Колхозăн пухса кĕртмелли тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем кăна 1.000 гектар ытла шутланать. Колхоз çак тырра вăхăтра пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ. Тырă вырас ĕçре 8 жнейкăпа туллин усă курнă. Тырпул пухса кĕртес ĕçе кунта пурĕ 500 çын ытла хутшăннă. Г. Самитов тата Т. Салахеев машинистсем кашни кунах 6,5 гектар тырă вырнă. Кунта машинăсемпе кăна кунне 50—60 гектар тырă вырса пухнă. Тырпул вырса кĕртес ĕçре Д. Динмухаметова ертсе пыракан 3-мĕш бригада мала тухса, колхозăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ. Колхоз государствăна 9.366 пăт тырă парса, хăйĕн обязательствине ăнăçлăн пурнăçланă. Транспорт бригади государство складне кашни кунах 100 центнер тырă леçнĕ.

Халĕ «Марс» колхозра кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Авăн çапнă çĕрте кăна 150 çынна яхăн ĕçлет. Сложнăй тата полусложнăй молотилкăсемпе кунне 600-шер пăт çапаççĕ. Молотилкăсемпе ĕçленĕ çĕрте двигательпе тата локомобильпе усă кураççĕ.

Колхозра кашни кун шурăмпуçпа тытăнса сĕм тĕттĕм пуличчен 20 лашапа кĕлте турттараççĕ. С. Ахметзянов, М. Галиева, С. Сагдиева тата Ш. Агмолина юлташсем кулленех 20-шер лав кĕлте кӳрсе, хăйсен планне 150-шар процент тултараççĕ. Колхозра столовăй пур, унта икĕ хутчен вĕри апат çитереççĕ. Апата вара колхозниксем ĕçленĕ çĕрех илсе пыраççĕ.

Колхозра агитаципе массăллă ĕçе тĕрĕс организациленĕ. Кашни кунах апат вăхăтĕнче агитаторсем çĕнĕ хыпарсене каласа параççĕ. Пурĕ 24 агитатор ĕçлет, вĕсен шутĕнче колхоз председателĕ Гаязов юлташ та пур. Ĕç пĕтерне хыççăн тунă ĕçе колхоз бригадирĕсем колхозниксемпе звеносенчен, бригадирсенчен вара колхоз председателĕ е унăн заместителĕ йышăнаççĕ. Кашни кунах бригадăсенче хаçатсем тухаççĕ, унта бригадăри пултаруллă çынсен ĕçĕсем çинчен çыраççĕ. Стахановецсене колхозри Хисеп хăми çине кĕртеççĕ. Колхозра куçса çӳрекен икĕ щит тата хаçат витрини тунă. Колхозниксем пушă вăхăтра хаçат вулаççĕ.

Елчĕк районĕнчи нумай колхозсем çакăн пек ĕçлеççĕ. Район тырпул пухса кĕртессипе чылай пысăк çитĕнӳ турĕ. Вăл çитĕнӳсене малашне те сарса пырассишĕн пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле.

В. АКЧЕЛЬ.

Çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар

СОВЕТСКОЕ. Тĕштырăсене вăхăтра вырса пуçтарнă хыççăн нумай колхозсем авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçе те ăнăçлăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. «Первое мая» колхоз районра чăн малтан государствăна тырă парса татрĕ. «Прогресс» колхоз районри чи пысăк колхозсенчен пĕри, кунта 8 бригада. Государствăна тырă парас енĕпе кашни бригадăнах уйрăм график панă. Кашни бригада хăйĕн графикне ирттерсе тырă леçет. Колхоз председателĕ С. Михайлов юлташ кунĕн-çĕрĕн авăн çапассине, тăтăшах государствăна тырă ярса тăрассине организациленĕ. Çавна пула колхоз паянхи куна 742 центнер вырăнне 894 центнер леçнĕ. «Комбайн», Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем те графика ирттерсе тырă леçеççĕ. «Добролет», «Красный партизан» колхозсенче лашапа çеç мар, тата 8 вăкăрпа тырă турттараççĕ. Çак колхозсем октябрĕн 1-мĕшĕччен государствăна тырă парса татма шутлаççĕ.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсенче тырă вырса пĕтертĕмĕр, халĕ ытти ниçенсе ĕçлемесен те юрать, тесе хĕрӳллĕ ĕçе хавшатма тытăннă. «Рекорд» колхозра авăн çапас, государствăна тырă парас ĕç начар çитĕнсе пырать. Колхоз председателĕ Матвеева юлташ государствăна тырă парас ĕçе кирлĕ пек ертсе пырас вырăнне пĕр ĕçсĕрех Шупашкарпа Етĕрнене кайса 5 кун ирттернĕ. Çак вăхăтра колхозра авăн çапман тата государствăна тырă та леçмен. Вускасси ял Советĕнчи колхозсем те тырă памалли графика тултарса пыраймаççĕ. «Броневик» колхозра авăн çапас ĕç сӳрĕккĕн пырать. Кунта кунне 6 сехет кăна çапаççĕ. Тырă чĕрĕ тесе, государствăна тырă памасăр тăраççĕ, çав вăхăтрах авăнпа, сушилкăпа усă курмаççĕ.

Володарский ячĕпе тăракан колхозра Етĕрне МТС-ĕн сложнăй молотилкипе авăн çапаççĕ. Молотилкăпа ĕçлекен Антонов хăйĕн машинине кирлĕ пек юсаса хатĕрлеменнине пула, вăл час-часах пăсăлать. Молотилка патĕнче 78 çын, 20 лаша ĕçлет, вĕсем молотилкăна юсанă чухне нимĕн те тумаççĕ. МТС молотилкипе 8 кун хушшинче пурĕ те 452 центнер кăна çапнă. Машинăна лайăх юсаман пирки улăм çине тырă нумай каять.

Авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсене туллипе пĕрлех, кĕрхи сĕртме тумалла тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсене пухса кĕртме тытăнмалла.

Н. ПУШКИН.

ЕЛКСМ Центральный Комитетĕнче

В. И. ЛЕНИН «ÇАМРАКСЕН СОЮЗĔН ЗАДАЧИСЕМ» ПИРКИ САМАХ КАЛАНИ 25 ÇУЛ ТУЛТАРНИ ÇИНЧЕН

1945 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче В. И. Ленин РКСМ III-мĕш съездĕнче «Çамрăксен союзĕн задачисем» çинчен историллĕ сăмах калани 25 çул тултарать. Çавна май ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомол организацийĕсене комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче Ленинăн çав сăмахне вуласа пама хушнă. Хуласемпе районсенчи комсомол активĕн тата комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсенче «В. И. Ленин РКСМ III-мĕш съездĕнче сăмах калани 25 çул тултарни» темăпа докладсем туса памалла.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ «Çамрăк гварди» издательствăна В. И. Ленинăн «Çамрăксен союзĕн задачисем» ятлă произведенине 500 000 экземпляр пичетлесе кăларма хушнă.

Финляндин Чрезвычайнăй посолĕ тата Полномочнăй министрĕ К. Сундстрем господин СССР Верховный Совет Председателĕн Заместительне Н. Я. Наталевича хăйĕн верительнăй грамотисене пани

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче Кремльте СССР Верховный Совет Председателĕн Заместителĕ Н. Я. Наталевич Финляндин Чрезвычайнăй посолне тата Полномочнăй министрне К. Сундстрем господина йышăннă. Сундстрем господин Н. Я. Наталевича хăйĕн верительнăй грамотисене панă. Сундстрем господинпа пĕрле Финлянди Миссийĕн пĕрремĕш секретарĕ И. Я. Вамамо господин пулнă. Посланник Н. Я. Наталевича Мамамо господинпа паллаштарнă. Верительнăй грамотăсене панă чухне çаксем пулнă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков, СССР Наркоминделĕн 5-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕ А. Н. Абрамов.

Верительнăй грамотăсем илнĕ хыççăн Н. Я. Наталевич К. Сундстрем господинпа калаçса илнĕ. Калаçăва В. Г. Деканозов хутшăннă.

ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОÇРА ТАТА ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИЙĔПЕ ИНВАЛИДСЕН КООПЕРАЦИЙĔНЧЕ ĔÇЛЕКЕНСЕН КАНАШЛĂВĔ

Сентябрĕн 16-мĕшĕнче Мускавра вырăнти промышленноçра тата промысла кооперацийĕпе инвалидсен кооперацийĕнче ĕçлекенсен пĕтĕм Российăри канашлăвĕ уçăлнă. Канашлу куллен кирлĕ таварсене тата апат-çимĕç таварĕсене ытларах туса кăларас ыйтусене сӳтсе-яват.

Çав ĕç çинчен РСФСР Совнаркомĕн Председателĕн Заместителĕ Н. Е. Чесноков юлташ доклад туса панă.

Канашлу ĕçне СССР Совнаркомĕн Председателĕн Заместителĕ—РСФСР Совнаркомĕн Председателĕ А. Н. Косыгин юлташ хутшăнса ĕçлет. Канашлу темиçе куна пымалла. (ТАСС).

КУТУЗОВА ТАТА УНПА ПĔРЛЕ ÇАПАСНА САР НАЧАЛЬНИКĔСЕНЕ ПАМЯТНИКСЕМ ЛАРТАССИ

М. И. Кутузов çуралнăранпа 200 çул тултарнă май, СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, Мускавра тата Бородино хирĕнче аслă вырăс полководецне памятниксем лартмалла. М. И. Кутузовпа пĕрле çапăçнă полководецсене Багратионпа Барклай-де-Толлие Бородино хирĕнче памятниксем лартмалла.

Кутузов памятникĕн проектне тăвас тĕлĕшпе СССР Халăх художникĕ С. Д. Меркулов тата Сталинла премии лауреачĕ Н. В. Томский ĕçлеççĕ. Н. В. Томский хальхи вăхăтра Севастопольте лартма Нахимов адмиралăн памятникне тата Мускавра лартма аслă вырăс художникĕн Репинăн памятникне хатĕрлет.

Багратионпа Барклай-де-Толли памятникĕсене тума БССР халăх художникне З. И. Азгура хушнă. (ТАСС).

ВИÇÇĔМĔШ ПЯТИЛЕТКА ЗАЕМĔН ВЫЛЯВĔ

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче Мускавра Виççĕмĕш пятилетка заемĕн (виççĕмĕш çулхи кăларăмĕн) вылявĕ пулса иртнĕ. Вылявра 846.400 выигрыш пулнă, вĕсем пĕтĕмпе 134.743.200 тенкĕлĕх пулаççĕ. Вăл шутра 3.000 тенкĕлĕх выигрышсем 92 пулаççĕ, 1.000-шер тенкĕлĕххисем—460; 500-шер тенкĕлĕххисем — 4.600; 200-шер тенкĕлĕххисем — 110.400; 150-шар тенкĕлĕххисем 730.848 выигрыш. (ТАСС).

КАЗАХСТАНРИ КОЛХОЗСЕНЕ ЭЛЕКТРИФИКАЦИЛЕНИ

Казахстанра 12 пĕчĕк электростанци туса пĕтерсе ĕçе янă. Çав электростанцисене пĕтĕмпех халăх вăйĕпе тунă. Вĕсем халĕ 12 колхоза, 2 МТС-а, район центне энерги парса тăраççĕ. Халь хи вăхăтра татах 35 гидроэлектростанци тăваççĕ. Вĕсенчен нумайăшне октябрь уявĕ тĕлне туса пĕтермелле. (ТАСС).

МУСКАВ

1.

Пурнăçра телей халалană пек
Йăлкăшса тăран эс, Мускавăмăр!
Ĕмĕрсен чаппе хавхаланнă пек
Çĕкленет санпа вăй-хăватăмăр.

Сан çире çап-çут Кремль çăлтăрĕ
Хĕлхемне сапать, хĕвелпе пĕрех,
Ленин генийĕ уçнă çул тăрăх
Тÿп-тÿрех утма йыхравлать пире.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр!
Сан çирен эпир юрă хывăрăмăр.
Йывăр кун çитсен, хĕç туптарă-
мăр,—
Петтăр пул яман эс, Çĕршывăмăр.

2.

Пĕрре мар иккен çичĕ ют çынни
Инкĕлми чапна санне хапсăннă.
Пĕрре мар, хăруш вăрçăпа тухса,
Вăрхурах этем сана тапăннă.

Суранланнă çĕр, хаярланнă чун,
Вутлă хĕç тытса кар çĕкленнĕ Русь.
Çеçкесем çинче кăварланнă юн,
Чаплă кун курма ÿснĕ çĕн ăру.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр,
Эс çĕршыв чĕри, хуласен хули!
Нихăçан сана юта памăпăр,—
Ĕмĕрне ан пул тăшмансен кулли!

3

Кĕрлесе тăран аслати иртсен
Сар хĕвел шевли тĕтрене сирет.
Тасалать чĕре. Ялтăраç питсем, —
Кремльрен Çулпуç саламлать пире.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр,
Тăвăла-çиле парăнмарăн эс!
Тăшмана чăл-пар çеç тустартăмăр,
Инкĕлми чаппа мухтанан халь эс.

Ой, Мускавăмăр, пирĕн чапăмăр,
Сан патвар чĕрÿ—паттăрсен чĕри.
Пархатарлăн халь юрра ятăмăр,
Ирĕк кун шевли хумхансан вĕрин.

4.

Еçлĕ кун иртет, канăç-кăç килет,
Ыранхи куна хапăллать тĕнче.
Лăпланать çĕршыв. Пĕр этем кăна
Тĕлĕрмест иккен, куç хупмасть
ирччен.

Ĕмĕрсем урлах тинкĕрсе пăхса
Хуралта тăрать ывăнми салтак.
Вăл курать, пĕлет: сĕмсĕр кăç
иртсен
Ашшăн йăлкăшĕ çутă кун татах.

Ой, Мускавăмăр, чыс-мухтавăмăр!
Сан чапна сыхлать пурнăç Улăпĕ.
Кашниех паян сăмах патăмăр
Чĕрепе пулма çисĕм чулĕ пек.

5.

Мавзолей çинче вăл тăрать ялан,
Саламлать пире ăшă кăмăллăн,
Нихăçан сÿнми аслă чаппала
Мухтава кĕме сывлăх суннă пек.

Куçĕпе пăхсан, кам-ши халь ăна
Чĕрине пама хатĕр пулмĕ-ши?
Тав тăвать тĕнче Аслă Сталина
Вилĕме çĕнме вăйхал кунĕшĕн!

Ой, çуллуçăмăр, çывăх тусăмăр!
Сан çинчен эпир юрă хыврăмăр.
Санпала пĕрле—харăс, пурсăмăр —
Виличчен пулма тупа турăмăр.

6.

Тĕттĕм сирĕлчĕ. Тул та çутăлчĕ.
Пĕлĕтре çисет миллион хĕвел.
Çĕкленсем, чĕрем! Чунăм, уçăлччĕ,
Çĕн Куна кĕме тасалса çĕнел!

Тăвăл иртрĕ халь иртĕ тертĕмĕр.
Шевле пек çисет ак Мускавăмăр.
Ăрусем-йăхсем! Ĕмĕрсем иртсен
Паянхи чаппа эсир савăнăр!

Ой, эс, пурăнăç, аслă пурăнăç!
Ĕмĕрсен чапне манăçа ан хыв.
Юмахри тĕнче майлăн курăнĕ
Ватăлми Мускав, парăнми Çĕршыв.

Илья ТУКТАШ.

Пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртмессĕ

МУРКАШ. Районри шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Муркашри вăтам шкул, Шетмĕпуçĕнчи 7 çул вĕренмелли шкул, Янăшри 7 çул вĕренмелли шкул, Шуркассинчи пуçламĕш шкул вĕренÿ çулне йĕркеллĕ пуçларĕç. Ку шкулсем пурне те хут вĕрентмелли закона пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыраççĕ. Муркашри вăтам шкулти 1-мĕш класа 43 ача, 10-мĕш класа 13 ача çÿремелле пулсан, вĕсем шкула пурте çÿреççĕ.

Анчах Йÿçкассинчи вăтам шкул (директорĕ Пушуев юлташ) вĕренÿ çулне хатĕрленмесĕр кĕтсе илчĕ. Хĕле валли вутă турттарса хатĕрлемен, шкул кантăкĕсем ванчăк, вĕренÿре кирлĕ хатĕрсене юсаса йĕркелемен. Ачасем валли вĕри апат организацилеме продуктсем тупса хатĕрлемен. Çавна пула кунта нумай ачасем шкула çÿремесĕр юлаççĕ. 1-мĕш класа 35 ача çÿремелле пулсан, 28 ача кăна çÿрет. Атапайри пуçламĕш шкула (заведующийĕ Львов юлташ) пурĕ 88 ача çÿремелле, анчах вĕсенчн 18-шĕ тĕрлĕ сăлтавсене пула шкула йĕркеллĕ çÿремеççĕ. Хаймалари 7 çул вĕренмелли шкула та ачасем япăх çÿреççĕ.

Çапла вара районĕпе 179 ача шкул тулашĕнче тăрса юлнă, вăл шутран 1-мĕш класа 39 ача çÿремест. Ял Советсен, колхозсен тата шкулсен руководителĕсем пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртессишĕн çителĕксĕр тăрăшаççĕ. Шкулсенчи комсомол организацийĕсем пионер организацийĕсен ĕçне йĕркелесе яман, чылай шкулсенче пионер вожатăйĕсене те тупса хатĕрлемен.

Районри çутĕç пайĕ те пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçлас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет.

Ф. МАЛЫШКИН.

Вĕренÿ çулĕнчи малтанхи çитменлĕхсем

ЭЛĔК. Вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕсенче Вутланти 7 çул вĕренмелли шкул I—IV-мĕш классенче вĕренекен ачасене пурне те шкула явăçтараймарĕ. Çакна шута илсе, шкул дирекцийĕпе учительсем вĕренме çÿремен ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе калаçса пăхрĕç те çакăн хыççăн вара ачасем шкула çÿресси чылай лайăхланчĕ. Халĕ шкултан сăлтавсăр юлакансем çук. Уйрăмăнах I-мĕшпе III-мĕш классенче вĕренекенсем шкула йĕркеллĕ çÿреççĕ.

Шкулта кашни ирхинех уроксем пуçланас умĕн физзарядка пулать, ăна военрук Васильев ирттерет. Учительсем хăйсен ĕçне юратаççĕ, ачасене тĕплĕн вĕрентме тăрăшаççĕ. Татьяна Семеновна учительница—шкулти чи лайăх учительсенчен пĕри. Вăл яланах уроксене лайăх хатĕрленсе пырать.

Анчах шкулта уроксене çителĕксĕр хатĕрленсе пыракан учительсем те пур. IV-мĕш класра вĕрентекен Евдокимова учительница сентябрĕн 10-мĕшĕнче истори урокне хатĕрленмесĕр пынă. Урокра вăл ачасене «сенат», «ассамблея» тата «император» йышши сăмахсене те ăнлантарса пама пултарайман.

Çавăн пекех II-мĕш класра вĕрентекен Илларионова учительница та уроксене çителĕксĕр хатĕрленсе пырать. Ачасенчен хăшĕсем чернилпа, хăшĕсем карандашпа çыраççĕ. Анчах çак çитменлĕхсем шкул дирекцине нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармаççĕ. Шкулта учительсене методикăллă пулăшу парассине те йĕркелемен, пионер отрячĕсем те ĕçлемеççĕ.

З. СЕМЕНОВ,
Районри çутĕç пайĕн инспекторĕ.

Лаша кăрчанки çинчен

Лаша кăрчанки (кĕсси)—хăрушă чир. Вăл выльăха вăйран ярса унăн ĕç пултарулăхне чакарма кăна мар, ăна вĕлерме те пултарать. Çавăнпа та выльăха кăрчанкă ертсен тин мар, кăрчанкăпа чирличченех унпа пур майсемпе те кĕрешмелле. Хăшпĕр район руководителĕсем çак усал чирпе кĕрешесси çине кирлĕ пек пăхмаççĕ. Çавна пула уйрăм вырăнсенче кăрчанкă халĕ те вăйлă сарăлнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнче юлашки икĕ уйăх хушшинче лаша кăрчанки чылай вырăнсене сарăлчĕ. Кунта районри учрежденисенче те, вăл шутра районри çĕрĕç пайĕнче те кăрчанкăллă лашасем пур. Анчах çапах та çак лашасемпе колхозран колхоза çÿреççĕ, лаша кăрчанкине сараççĕ. Ветеринари работникĕсем кăтартнине, лашасене сыватас тĕлĕшпе кирлĕ мероприятисем тума хушнине пурнăçламаççĕ. Чирлĕ лашасене сыввисенчен уйăрмаççĕ, районри лечебницăна илсе пырса кăтартмаççĕ. Çакна пула районра кăрчанкă сарăлнăçемĕн ытларах сарăлса пырать.

Муркаш, Шăмăршă, Ишлей, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче лаша кăрчанкине вăхăтлăха пĕтернĕ те вара лăпланса ларнă, кăрчанкă малашне ан пултăр тесе нимĕн те тумаççĕ.

Çак районсенче кăрчанкăллă лашасене вăхăтран вăхăта кăна кăрчанкăран сыватмалли эмелсем сĕреççĕ, кăрчанка тĕппипех пĕтерес тĕлĕшпе пур тĕрлĕ мероприятисене те, профилактикăллă ĕçсене те тумаççĕ. Чирлĕ лашасене сыввисенчен уйăрмаççĕ, витесемпе ут таврашĕсене дезинфекцилемеççĕ. Час-часах уйрăм колхозсенче, ут таврашĕсем çителĕксĕррине пула, чирлĕ лаша çинче пулнă хăмăта е ытти ут таврашне сывă лашасене кÿлсе ĕçлеççĕ. Ветеринари работникĕсем ирĕк памасăрах, кăрчанкăллă лашасемпе урăх колхозсене кайса çÿреççĕ. Çакă вара кăрчанкă сарма пултарать.

Самăр выльăха кăрчанкăран сыватма çăмăлтарах. Анчах та уйрăм вырăнсенче кăрчанкăллă лашасене лайăххах çитересси çине çителĕклĕн çаврăнса пăхмаççĕ. Кăрчанкă сарăлма пултаракан вырăнсенчи хăшпĕр колхозсен лашисем ытла та ырхан. Çавăн пек колхозсем Муркаш районĕнче пур. Вĕсен шутне «Красное знамя», «Мировой Октябрь» тата «Новое Акрамово» колхозсем кĕреççĕ.

Колхоз председателĕсем, çĕрĕç органĕсенчи работниксем тата советпа партин вырăнти организацийĕсен руководителĕсем кăрчанкăпа кĕрешес ĕçе организацилессишĕн ответлă пулса тăраççĕ.

Лаша кăрчанкине пĕтĕмпех тата пур тĕлте те пĕтерессн питĕ ответлă тата паянах тумалли ĕç пулса тăрать. Уйрăмăнах хальхи сивĕтечченхи çанталăкпа усă курмалла. Кăрчанка хирĕçле тумалли ветеринарин пур тĕрлĕ мероприятийĕсене те пурнăçласан кăна кăрчанка тĕппипех пĕтерме пулать. Районсенчи совет, парти тата обществăллă организацисемпе колхозсен лаша кăрчанкине пĕтĕмпех тата пур тĕлте те пĕтерес тĕлĕшпе пикенерех ĕçлемелле. Кăрчанкă сарăлма пултаракан вырăнсене çак чирпе хирĕç тăвакан мероприятисене ирттерме районри ветеринари работникĕсене, зоотехниксене пурне те мобилизацилемелле. Вĕсене кăрчанкă сарăлма пултаракан колхозсене çирĕплетсе ответлă пулса тăни çинчен асăрхаттармалла. Чирлĕ тата чир енчен шанчăксăр лашасене халех ыттисенчен уйăрас пулать. Чирлĕ лашасемпе чир енчен шанчăксăр лашасем тăнă витесене икĕ уйăхлăха хупмалла, вĕсене тĕплĕн тасатса дезинфекцилемелле тата шуратмалла. Кăрчанкăпа чирлĕ лашасем пур вырăнсене чире пĕтĕмпех пĕтериччен карантин тăвас пулать. Урăхла каласан, çак колхозран е ялтан ытти вырăна лашапа тухса каймалла мар тата унта та лашапа пырса кĕмелле мар йĕрке туса хумалла.

Чирлĕ лашасене сыватас тĕлĕшпе пирĕн аларн пур тĕрлĕ эмелсемпе те: креолинпа, формалинпа, тикĕтпе, керосинпа, автолпа, табак шывĕпе, флеминг шевекĕпе, кÿкĕртлĕ сĕлтĕ шывĕпе тата ыттисемпе те анлăн тата туллин усă курмалла.

Чкаловски районра кăрчанкăллă лашасене сыватас ĕçре 8—10 процентлă ртуть мазĕпе усă курнă. Çак эмелпе усă курни кунта лайăх тĕслĕхсем панă. Анчах та лаша кăрчанкине пĕтерес ĕçре газпа усă курни чи шанчăклă тата паха мероприяти пулса тăрать. Çавăнпа та мĕнпур газокамерăсене юсаса ĕçе юрăхлă туса хумалла. Газокамера çук районсенче вĕсене халех тумалла, мĕншĕн тесен çаксене тума кашни районпа май уйăхĕнчех çителĕклĕ таран укçа-тенкĕ уйăрса панă.

Лаша кăрчанкине тĕппипех пĕтерес тесен, кăрчанкăллă лашасене сыватни çителĕксĕр, чир енчен шанчăксăр пур вырăнсенче те лашасене кăрчанкă пĕтерекен эмелсемпе икĕ хутран кая мар профилактикăллă мероприятисене туса ирттермелле.

Лаша кăрчанкипе нумай вăхăт хушши кĕрешсен, ветеринари ыйтнине яланах пĕр пăркаланмасăр туса пырсан кăна кăрчанка тĕппипех пĕтерме пулать. Пирĕн çакна тума пур условисем те çителĕклĕ.

А. КРИВИЛЕВ.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Ветеринари Управленийĕн начальникĕ.

Лондонри Совет посольствинче пулнă пресс-конференцире В. М. Молотов тухса калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 18-мĕшĕнче Лондонри Совет посольствинче ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пресс-конференци пухнă. Вăл пресс-конференцие Англине ытти çĕршывсен 60 журналисчĕ ытла пулнă. Çав пресс-конференци çинчен тĕплĕн каласа паратпăр.

В. М. Молотов юлташ пресс-конференцие пуханнă журналистсене саламланă та вĕсем паракан ыйтусем çине ответсем пама килĕшнĕ.

ЫЙТУ: Совет делегацийĕ Греци ыйтăвĕ пирки министрсен канашлăвне меморандум çырса панă-и? Çырса панă пулсан, çав меморандумра мĕн каланă?

ОТВЕТ: Меморандум çырса панине эпĕ тунмастăп, анчах та унта мĕн çырни çинчен кунта калама кирлĕ мар пуль. Грецири лару-тăру пирки Совет правительстви мĕн шухăшланине эсир унсăрăн та лайăх пĕлетĕр.

ЫЙТУ: Совет Союзĕ Триест пирки мĕн шухăшлать?

ОТВЕТ: Кун çинчен вăхăт çиттиччен калама кирлĕ мар. Паян Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕнче вăл ыйту пирки Югослави делегацийĕн шухăшне итлерĕмĕр. Унтан Итали делегацийĕ мĕн шухăшланине итлĕпĕр. Çавăн хыççăн вара вăл ыйту пирки хамăр шухăша каласа пама çăмăлтарах пулĕ. Паллах ĕнтĕ, Совет делегацийĕ Югославипе Итали хушшинчи тавлашуллă ыйту пирки хăйĕн позицине хÿтĕлĕ. Ку ак мĕне пĕлтерет: хорватсемпе словенсем пурăнакан çĕрсем Югослави аллинче пулмалла. Çакăнпа килĕшмеллех пулать: Югослави пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç союзниксемпе пĕрле паттăррăн çапăçнă хыççăн вăл çав ыйту пирки хăйĕн шухăшне тивĕçлипе хисеплеттерме пултарать, çапла тума унăн право пур.

ЫЙТУ: Румыни, Болгари тата Венгри правительствисем çине Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Англи мĕнле пăхни çинчен хăвăрăн шухăшăра каласа памăр-и?

ОТВЕТ: Эпĕ ун çинчен каласшăн мар. Анчах та эсир калаттарас тетĕр пулсан, çав ыйту пирки Совет правительстви мĕн шухăшлани çинчен каласа пама пултаратăп. Румынипе, Болгарипе тата Венгрипе демократиллĕ правительствăсем ĕçлесе тăраççĕ. Çав правительствăсене вăл çĕршывсенчи халăхсен питĕ пысăк пайĕ шанса пулăшса тăрать. Эпир çапла шутлатпăр: çав правительствăсем хăйсен çĕршывĕсенче йĕркепе лăпкă пурнăç туса хуни вĕсен хисеплеме тивĕçлĕ пысăк ĕçĕ пулса тăрать. Çав çĕршывсенче халь ĕçлекен демократиллĕ правительствăсене тăвиччен унта ун пек йĕрке тата лăпкă пурнăç пулман. Çакна уйрăмах Румыни пирки каламалла. Унта Гроза правительствине туса хуриччен Радеску правительстви пулнă. Çав правительствăра Совет Союзне хирĕç пыракан çынсем нумай пулнă, вăл Румынире йĕрке тăваймаи тата Румынипе Совет Союзне пĕрле кирлĕ пек çыхăнтарса тăрасшăн пулман.

Кунсăр пуçне, Румынин хальхи правительстви СССР, Великобритани тата США хăйпе тунă перемири условийĕсене чыслăн пурнăçласа пырать. Румынин унччен правительстви çинчен çапла калама май çукчĕ.

Румынипе Болгарире хальхи правительствăсем пурин кăмăлне те каймаççĕ, теççĕ. Анчах тĕнчере пур çын та кăмăллакан правительство пур-ши вара? (Кулаççĕ). Кунта çакна каламалла: мир тăвас ыйту енчен пăхсан, шалти политика тĕлĕшпе те, тулашри политика тĕлĕшпе те Румынири, Болгарири тата Венгрири хальхи демократиллĕ правительствăсене мĕне те пулин урăхла тума хушма сăлтав çук пирĕн.

Румынире Гроза правительствине туса хунă. Маниупа Братиануя политикăлла ушкăнĕсене те çав правительствăна хăйсен представителĕсене яма сĕннĕ пулнă. Анчах та вĕсем правительствăра хăйсене ытла та нумай вырăн пама ыйтнă, хăйсем çĕршывра политика тĕлĕшпе мĕнле вырăн йышăнса тăниччен ытларах вырăн пама ыйтнă. Гроза, паллах ĕнтĕ, вĕсем ыйтнипе килĕшмен.

Эпир, совет çыннисем, çапла шухăшлатпăр: правительство составне халăх улăштармалли государство чăнах та пур, анчах та вăл Румыни те мар, Болгари те мар, Венгри те мар.

ЫЙТУ: Эсир мĕнле правительство çинчен калатăр вара?

ОТВЕТ: Шухăшласа пăхма парăр-ха (кулаççĕ).

Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, Румынире, Болгарире, çавăн пекех тата Венгрире часах суйлавсем пулса иртмелле. Çав суйлавсенче, демократиллĕ çĕршывсенче йышăннă пекех, пурте пĕртан тата вăрттăн сасăлĕç. Çапла суйлани халăх ирĕкне палартма май парĕ. Çĕнĕ парламентсем правительствăсен составне мĕнле улăштарса лайăхлатмалли çинчен шухăшласа пăхĕç. Парламентăн çав ирĕкне никам та хĕсĕрлесшĕн пулмĕ, тесе шутлатăп.

ЫЙТУ: Суйламаллисен спискĕнче политикăллă пĕр партин кандидачĕсем çеç пулĕç-и?

ОТВЕТ: Çав çĕршывсенчи суйлав законĕсем тăрăх, суйламалли кандидатсем хушшинче политикăллă темиçе партин представителĕсем пулмалла.

ЫЙТУ: Совет Союзĕнче суйлавсем хăçан пулса иртĕç?

ОТВЕТ: Часах пулса иртĕç.

ЫЙТУ: Колони пулнă Эритрея пирки Совет Союзĕ мĕнле позици йышăнса тăни çинчен каласа пама пултараймăр-и?

ОТВЕТ: Итали колонийĕсем пирки тăракан ыйтăва халĕ сÿтсе яватпăр. Эпĕ çакна пытармастăп ĕнтĕ: çак ыйтăва мĕнле татса пани СССР-шăн пурпĕр мар.

ЫЙТУ: Совет Союзĕ Триполитани пирки кăларса тăратнă ыйту çинчен «Нью-Йорк геральд трибюн» пĕлтернĕ май хăвăрăн шухăшăра каласа параймăр-и?

ОТВЕТ: Çав пĕлтерÿре чăнлăх пăртак пур. Анчах эпĕ ун çинчен халь калаймăп. Вăл ыйтăва эпир сÿтсе яватпăр-ха.

ЫЙТУ: Крымри конференци Греци пирки йышăннă решенисене союзниксем пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, тесе шутлатăр-и эсир?

ОТВЕТ: Крымри конференцире Греци ыйтăвне сÿтсе явман, ун пирки унта нимĕнле решени те йышăнман.

ЫЙТУ: Эпĕ ирĕке каларнă пур çĕршывсенче те демократиллĕ правительствăсем тумалли çинчен калакан решение аса илсе ыйтрăм.

ОТВЕТ: Эсир çакна шанса тăма пултаратăр: Совет правительстви шухăшĕпе, Грецире демократиллĕ правительство мĕн чухлĕ хăвăртрах туса хурĕç, çавăн чухлĕ Грецие хăйне те, союзниксене те лайăхрах пулĕ.

ЫЙТУ: Итали колонийĕсем тĕлĕшпе тумалли администраци çинчен вырăнсем мĕн шухăшлаççĕ? Совет Союзĕ çавăн пек колонисене Пĕрлешнĕ Нацисен совечĕ пăхса тăмалла тет-и, е уйрăм государствăсем пăхса тăмалла тет-и?

ОТВЕТ: Совет правительстви, Сан-Францискăри конференцире пулнă ытти правительствăсем пекех, Пĕрлешнĕ Нацисен совечĕ пăхса тăмалла тесе те, уйрăм государствăсем пăхса тăмалла тесе те каларĕ.

Хальхи вăхăтра эпир государствăсем пĕрле пăхса тăмаллине сÿтсе яватпăр. Уйрăм государствăсем пăхса тăнин опычĕ паллă. Çав опыт пур чухне те лайăх пулнă тесе калассшăн мар эпĕ (кулаççĕ), анчах çапах та çавăн пек опыт пулнă. Темиçе государство пĕрле пăхса тăни халиччен пулман-ха, çапах эпир вăл принципа тĕрĕс тесе шутлатпăр. Итали колонийĕсене мĕн тумалла?—çак ыйту тăрать халь пирĕн умра. Çапла каласан лайăхрах пулĕ: кунта темиçе государство пĕрле пăхса тăмалли принцип çинчен сăмах пынă пирки, пирĕн уйрăмах сыхлануллă пулмалла. Вăл принципа халиччен пурнăçа кĕртсе курман. Çавăнпа та эпир çапла шутлатпăр: Итали колонийĕсем пирки ыйтăва татса панă чухне уйрăм государствăсем пăхса тăрас принципа пăрса ямалла мар.

ЫЙТУ: Итали колонийĕсенчен хăшне те пулсан пăхса тăма Совет Союзне пама ыйтман-и СССР?

ОТВЕТ: Эпĕ тепĕр хут калатăп: ку ыйтăва министрсен советĕнче сÿтсе явман-ха, çавăнпа эпĕ унта сÿтсе явиччен ун çинчен каласшăн мар.

ЫЙТУ: Эсир Додеканез утравĕсене колони тесе шутлатăр-и, Итали колонийĕсем çинчен калаçнă чухне çав утравсен ыйтăвне сÿтсе явас тетĕр-и?

ОТВЕТ: Паллах, Додеканез утравĕсем колонисем мар. Вăл утравсем çинчен сÿтсе яватпăр, анчах та вĕсене колонисем пек шутласа мар, вăл утравсене, Итали аллинче юлма пултараймансскерсене, малашне мĕн тумалли çинчен сÿтсе яватпăр.

ЯПОНИРЕ ХĂЙСЕНЕ ХĂЙСЕМ ВИЛНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 17-мĕшĕнче Японин Таири 18-мĕш çар штабĕн начальникĕн заместителĕ пулнă генерал-лейтенант Ханада Хитопа хăйне хăй вилнĕ.

САН-ФРАНЦИСКО, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Японецсен «Асахи» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Иосио Синогука генерал-лейтенант, Японин аслă çар совечĕн членĕ пулнăскер, карланкине хĕçпе касса татса хăйне хăй вилнĕ.

САН-ФРАНЦИСКО, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио пĕлтернĕ тăрăх, Суя полковник, Борнео утравĕ çинче тыткăнрисен лагерĕн начальникĕ пулнăскер, хăйне хăй вилнĕ. Вилес умĕн ăна Австрали çарĕн штабне допроса чĕнмелле пулнă. Суя полковник союзниксен тыткăна лекнĕ 600 çар çыннине вĕлернишĕн ответ тытмалла.

ТОКИО ЗАЛИВĔНЧИ ÇЫРАНРИ ОБОРОНА СООРУЖЕНИЙĔСЕНЕ ПĔТЕРСЕ ТĂКНИ

САН-ФРАНЦИСКО, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 3-мĕш флочĕн командующийĕ Хэлси адмирал çапла каланă: Токио заливне кĕмелли вырăна хÿтĕлесе тăракан çыран хĕрринчи оборона сооруженийĕсене пĕтерсе тăкнă. Çавăн пекех тата японецсен 51 пĕчĕк подводнăй лодкине, 103 подводнăй лодкине, хăйсене вилме ниленĕ японецсем тытса пымалли 1.133 торпедăна пĕтерсе тăкнă. Çыран хĕрринчи 25 туппа сирпĕнтерсе янă.

ЯПОНИРИ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Тодзио кабинетĕнче сыхăнупа чугун çул министрĕ пулнă Терадзимăпа Иокогама хулинчи тĕрмене хупса лартнă. Халĕ ĕнтĕ японецсем Пирл-Харбора тапăннă вăхăтра Япони правительствин, икĕ членĕсĕр пуçне, пур членĕсене те арестленĕ, е вĕсем хăйсене хăйсем вилнĕ.

ТОКИО, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Японири радио çапла пĕлтерет: Японин суту-илÿпе промышленность министрĕ пулнă Нобусуке Кисне союзниксен главнокомандованийĕ вăрçă преступникĕсен списокне кĕртнĕ. Вара вăл хăех американецсен 8-мĕш çарĕн штабне пынă. Çавăн пекех тата çав штаба çак вăрçă преступникĕсем пынă: жандармери полковникĕ Сейицы Ота тата полковник Хироси Такеупи.

САН-ФРАНЦИСКО, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио Мьючуэлл радио компанийĕн корреспонденчĕ пĕлтернине панă. Пĕлтерÿре çапла каланă: Токио таврашĕнче Иосихиса Кудзу ятлă вăрçă преступникне тытса хупнă. Вăл «Хура дракон» обществин руководителĕ пулнă.

БЕЛЬЗЕНРИ ГИТЛЕРЛА ЛАГЕРЬТИ ПАЛАЧСЕНЕ СУД ТУМА ПУÇЛАНĂ

БЕРЛИН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Люнебургра (Англин оккупаци зонинче) Германири вăрçă преступникĕсен пĕрремĕш пысăк процесĕ пуçланнă. Вăл суда союзниксен влаçĕсем организацилерĕ. Бельзенри гитлерла лагерьте тискер ĕçсем тунăшăн айăпланакан Крамер тата унăн 45 юлташĕ суд умне тăнă.

Айăпланакансем суда 50 свидетеле чĕннĕ тата 300 свидетель ытла çырса панине тăратнă.

Суд икĕ эрнене яхăн пырать. Суд членĕсем пулма генерал-майора тата 4 офицера лартнă.

ДЖОЙСА СУД ТУНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Лондонри тĕп уголовнăй судра Англири фашистсен союзне тăвакансенчен пĕрин Джойсăн ĕçне пăхса тухма пуçланă. Джойса государствăна сутнăшăн, Германире «Хау-Хау лорд» ячĕпе радио тăрăх сăмахсем каласа «король тăшманĕсене пулăшнăшăн» тата вăрçă пуçланнă хыççăн «Германи подданăйĕ пулма тăрăшнăшăн» айăпласçĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Лондонри центральнăй уголовнăй суд сентябрĕн 19-мĕшĕнче Англири фашистсен союзĕн организаторĕ пулнă Джойса вĕлермелле тунă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн секретариачĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 18-мĕшĕнче каçхине Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн секретариачĕ çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

«Сентябрĕн 18-мĕшĕнче ирхи ларура Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советĕнче Китайăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ван Ши-цзе доктор председатель пулнă. Ларура Югослави вице-премьерĕ Кардель доктор Италипе Югослави чикки пирки Югослави правительстви шухăшне каласа кăтартнă.

Сентябрĕн 18-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен тепĕр лару пулса иртнĕ. Ларăва Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарĕ Джеймс Бирнс председатель пулса ертсе пынă.

Ларура Кардель доктор Италипе Югослави чикки пирки Югослави правительстви шухăшне каласа пĕтернĕ, унтан вара Италин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ граф де Гаспери çав ыйту пиркиех Итали правительстви шухăшне каласа панă.

Çапла йышăннă: каçхине тепĕр лару туса ирттерес. Ку ларура çав ыйту пиркиех Англи доминионĕсен представителĕсене итлес».

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 19-мĕшĕнче каçхине Лондонра çакăн пек пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă:

«Сентябрĕн 19-мĕшĕнче Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ икĕ лару туса ирттернĕ. Икĕ ларура та Италипе тумалли мирлĕ договорăн условийĕсене сÿтсе явнă. Вара Совет çапла йышăннă: министрсен заместителĕсен Югославипе Итали чикки çинчен тата Триест çинчен сÿтсе явмалла та Ют çĕршыв министрĕсен советне доклад тăратмалла. Докладра çак ыйтусене çутатса памалла:

Пĕрремĕшĕ—Югославипе Итали хушшинчи чикĕ çинчен; çав чиккĕн пĕр енче итальянецсем юлмалла, тепĕр енче Югослави халăхĕсем пулмалла; ют çĕршыв правительствине пăхăнмалла пулса юлакан халăхăн хисепĕ питĕ сахал пулмалла. Вара çак чикке, ăна Советра татăклăн çирĕплетсе париччен, вырăнта лайăх пăхса тухмалла.

Иккĕмĕшĕ—Триестра интернациональнăй режим туса хурасси. Çав режим тĕнчери суту-илÿре Триест порчĕпе тата транзит условийĕсемпе пурне те пĕртан усă курма май памалла. Çавăн пекех тата Югослави, Итали тата Вăтаçĕрти Европăри çĕршывсем те усă курма пултармалла. Çав йĕрке тĕнчери ытти ирĕклĕ портсенчи пекех пулмалла.

Советăн çитес ларăвĕ сентябрĕн 20-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пулмалла».

ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ ЯЧĔПЕ ПУЛСА ИРТНĔ АПАТЛАНУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хальхи вăхăтра Лондонра ĕçлекен Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ ячĕпе сентябрĕн 17-мĕшĕнче Англи премьер-министрĕ Эттли Сент-Джемскри дворецра апатлану туса ирттернĕ.

Апатланура çаксем пулнă: В. М. Молотов, Э. Бевин, Д. Бирнс, Ван Ши-цзе, Ж. Бидо тата канашлăва хутшăннă державăсен делегацийĕсен членĕсем.

БРИТАНИ ТРЕД-ЮНИОНĔСЕН КОНГРЕСĔНЧЕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 13-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Британири Тред-юнионсен конгресĕ резолюци йышăннă. Çав резолюцире Англи правительствине Совет Союзĕпе суту-илÿ килĕшĕвĕ тăвас пирки калаçусем пуçласа яма сĕннĕ. Çак резолюцие йывăç каскалакансен союзĕн делегачĕ тăратнă. Вăл, Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх договорне асăнса, вăхăта нимăсса тăмасăр суту-илÿ договорĕ тума сĕннĕ. Англи нумай çул хушши строительствăра кирлĕ йывăçа ют çĕршывсенчен кÿрсе тăчĕ. Совет Союзĕн Англие кирлĕ йывăç темĕн чухлех. Англин сурт-йĕрсем тума та, сĕтел-пукан тума та йывăç çитмен. Ку пĕр енчен, тепĕр енчен—Совет Союзĕ ытти çĕршывсенчен машинăсем илсе тăма тăрăшнă. Çакă вăл Англипе Совет Союзĕ суту-илÿ договорĕ тăвас ĕçре çирĕп никĕс пулнă.

СТИМСОН ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Вашингтонра çар министрĕ Генри Стимсон çар министрĕ вырăнĕнчен тухни çинчен пĕлтернĕ. Унăн вырăнне Роберт Паттерсона лартаççĕ, вăл ку таранччен çар министрĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА НЕФТЬ ÇИНЧЕН КАЛАÇНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Лондонра нефть пирки килĕшÿ тăвас ыйтусем тĕлĕшпе калаçса татăлмашкăн Англипе Америка представителĕсен канашлăвĕ уçăлнă.

АМЕРИКАРИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ШТАТСЕН ФИНЛЯНДИРИ ПОСЛАННИКĔ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент государство департаменчĕн сотрудникне Максвэлл Гамильтон господина Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Финляндири посланникĕ пулма лартнă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00261 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59 42 п. л. Тираж 16.000 экз.